28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1945
СЕНТЯБРЬ
18
ЫТЛАРИКУН
181(6932) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) Обкомĕпе
Шупашкар хула комитечĕн,
ЧАССР Верховный Совечĕн
тата Шупашкар хула
Совечĕн хаçачĕ

Выльăхсене хĕл каçарма кăтартуллă хатĕрленсе çитессишĕн ăмăрту организацилер!

Вăрçă хыççăнхи пĕррремĕш çулăн геройла хроникине паянхи кун паллă кун пулса кĕрсе юлать. Çĕршыв вăй-хăватне малалла тĕреклетессишĕн пыракан пĕтĕм халăх юхăмĕнче Кострома колхозникĕсемпе колхозницисем çĕнĕ чаплă ĕç пуçарса ячĕç. Вĕсем паян «Правда» хаçатра пичетлесе кăларнă чĕнӳпе колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе çĕнĕ çитĕнӳсем тăвассишĕн Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту пуçласа ярассĕ.

Вăрçă пынă вăхăтра колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекенсем хăйсен патриотизмне питех те нумай хутчен кăтартса панă. Хĕрлĕ Çарпа çĕршыва аш-какай, сĕт-çу тата ытти çимĕçсем татти-сыпписĕр парса тăрас тесе, вĕсем ывăнма пĕлмесĕр, пĕтĕм вăя хурса кĕрешнĕ. Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсемпе асапсене пăхмасăрах, вĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе тăтăшах вăйлатса пынă. Вĕсен ĕçĕ тăшмана аркатса тăкса çĕнтерӳ тума пулăшрĕ. Вĕсем мĕн тери пысăк вăй хунине паян ăмăрту пуçарса яракан «XII-ый Октябрь» ялхуçалăх артелĕн тĕслĕхĕсем лайăх кăтартаççĕ.

Вăрçă тăватă çул хушши пычĕ. Анчах артель государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли хăйĕн обязательствисене тултарманни пĕрре те пулман. Аш-какайпа сĕт-çу вăрçă валли боеприпаспа тырпул пекех кирлине колхозниксем яланах асра тытнă. Çавна асра тытнă та государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем çулран çул ытларан ытларах парса тăнă. 1944 çулта кăна артель государствăна 600 пăт какай, 86.000 литр ытла сĕт панă.

Вăрçă вăхăтĕнче аш-какайпа сĕт-çу тата ытти таварлă продуктсем парас ĕçе вăрçăччепхи шайрах тытса тăрасси—çăмăл задача мар. «XII-ый Октябрь» артель çав задачăна татса панă кăна мар, вăл малалла та кайнă. Выльăх-чĕрлĕхрен таварлă продукци илессине ӳстернипе пĕрлех, вăл выльăх-чĕрлĕх йышлăн ĕрчетнĕ.

Вăрçăччен артельте 230 пуç ĕне-выльăх пулнă, халĕ унта 296 пуç пур. Сурăхсен йышĕ вăрçă вăхăтĕнче тăватă хут, сыснасен йышĕ икĕ хут ӳснĕ. Государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне артель çулран çул ирттерсе тултарса пынă. Вăрçă çулĕсенче вăл, хăйĕн ферминче çĕнĕ, Кострома ăратлиллĕ ĕнесем çитĕнтерсе, ытти колхозсене 260 пуç панă. Фермăра кашни ĕнерен вăтам шутпа 3.602-шер литр сĕт суса илнĕ.

«XII-ый Октябрь» колхоз пĕччен кăна палăрса тăмасть. Статистика пирĕн мĕнпур выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç ӳссе пыни çинчен калать. 1944 çулта кăна выльăх-чĕрлĕхсен йышĕ темиçе миллионшар пуç ӳснĕ. Кăçалхи çул выльăх-чĕрлĕх йышĕ çĕнĕрен ӳснипе палăрса тăрать. Кăçалхи 7 уйăх хушшинче кăна колхозсенче ĕне-выльăхсен йышĕ 6 процент, сурăхсемпе качакасен йышĕ — 22 процент, сыснасен йышĕ—23 процент, лашасен йышĕ—5 процент ӳснĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен совет çыннисем вăрçăн хаяр çулĕсенче çавăн пек ĕçленĕ ĕнтĕ. Халĕ вăрçă пĕтрĕ. Мирлĕ аталану тапхăрĕ пуçланчĕ. Пĕтĕм çĕршыв умне тухса тăнă пекех, ял умне çĕнĕ задачăсем тухса тăчĕç, малалла аталанмалли çĕнĕ çулсем уçăлчĕç. Пурнăç пĕтĕм халăх хуçалăхне, вăл шутра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе те тата хăвăртрах аталантарса пыма хушать.

Хăйсен патриотла тивĕçне шанчăклăн тытса пырса, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри малта пыракан совет çыннисем çĕнĕ похода тухаççĕ. Ăмăртăва пуçласа яракансен—«XII-ый Октябрь» артель членĕсен ячĕпе вĕсем 1945 çулта лашасен, ĕне-выльăхсен, сурăхсемпе сыснасен йышне ӳстерес тĕлĕшпе государство панă задание ирттерсе тултарма, государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли обязательствăсене срокчен тултарма тата обязательствăсене тултарнă хыççăн государствăна аш-какайпа сĕт нумай сутма сăмах параççĕ.

Кострома колхозникĕсен хăйсем умне лартнă задачăсене пурнăçа кĕртме май пур-и-ха? Çапла, пурнăçа кĕртме май пур. Малта пыракан фермăсен кăна мар, мĕнпур колхоз фермисен те малалла ӳсме çав тери пуян майсем пур. Анчах пĕр паха ĕçе пурнăçламасан, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри чи лайăх плансем те сая кайма пултараççĕ. Кунта выльăхсене хĕл каçарасси çинчен, выльăхсем валли апат-çимĕç хатĕрлесси çинчен, выльăх витисене юсаса ăшăтасси çинчен сăмах пырать. Ферма аллинче апат-çимĕçĕн кирлĕ запасĕсем, лайăх çуртсем пулаççĕ пулсан, çав фермăн выльăхĕсем вилмĕç, вĕсен тухăçлăхĕ чакмĕ. Çавсем пулмасан вара, выльăхсем ырханланса чире кайма пултараççĕ, выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ чакса кайма пултарать. Çавна ăна Кострома облаçĕнчи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекенсем лайăх ăнланаççĕ. Вĕсем выльăх-чĕрлĕхе ăшă çĕрте, тутă тытса хĕл каçарма, чăн-чăн хуçасем пек, тĕплĕн хатĕрленеççĕ. Анчах çавăн çинчен, иртнĕ çулсенчи пекех, хăшпĕр кая юлнă облаçсемпе крайсенчи, республикăсенчи работниксем манаççĕ.

Выльăхсене витене хупса усрас вăхăт çывхарса килет пулин те, нумай районсенче выльăхсене хĕл каçарма çителĕксĕр хатĕрленеççĕ, выльăх-чĕрлĕх çурчĕсене вăрахăн юсаççĕ, апат-çимĕç пухса хатĕрлемелли плана тултарман. Хăшпĕр колхозсемпе совхозсенче выльăхсем валли апат-çимĕç çителĕксĕр пулин те, улăх-çарансене çулмасăр нумай хăвараççĕ, силос хывмалли плана тултармаççĕ.

Халĕ, кĕркунне килсе çитнĕ чухне, выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленес тĕлĕшпе çаплах вăрахăн ĕçлени пысăк сиенсем патне илсе çитерме пултарать. Выльăхсене хĕл каçарма апат-çимĕçпе çуртсене хăвăртрах хатĕрлесе çитерес тесе, халĕ партипе советăн вырăнти кашни организацийĕ чи çирĕп мерăсем йышăнма тивĕçлĕ. Апат-çимĕç пухса хумалли плана тултарман колхозсемпе совхозсенче çитмен апат-çимĕçе хатĕрлес ĕçе халех организацилемелле, çулмасăр юлнă улăх-çарансене çулмалла, çулнă хыççăн тепĕр хут ӳссе ларнă курăка çулмалла, çĕнĕрен силос хывмалла, уй хиртен мĕнпур улăма, арпапа пучаха пухса кĕртсе, вĕсене выльăх-чĕрлĕх валли упрамалла.

Ниепле те кая хăварма çук ĕçсене тунипе пĕрлех выльăх-чĕрлĕх витисене те хăвăрт хатĕрлемелле. Районсем тăрăх, районсенче вара—колхозсемпе совхозсем тăрăх выльăх-чĕрлĕх çурчĕсене тумалли, юсаса ăшăтмалли сроксене палăртса хурас пулать. Çав ĕçсене пур çĕрте те октябрĕн 15-мĕшĕччен туса ĕлкĕртмелле. Выльăх-чĕрлĕх çурчĕсене юсаса ăшăтас тĕлĕшпе ĕçлеме кашни колхозпа совхозрах ятарласа бригадăсем уйăрмалла.

Выльăх-чĕрлĕх апачĕ хатĕрлемелли плана тултарасси тата выльăхсем валли çуртсем хатĕрлесси—хĕле хатĕрленес ĕçри чи кирлĕ задачăсем пулса тăраççĕ. Анчах çакăн çинчен те манмалла мар: выльăх-чĕрлĕх йышне тĕрĕс-тĕкĕл сыхласа усрасси тата малалла ӳстересси, унăн тухăçлăхне ӳстересси, чи малтан, фермăсенче йĕркелĕх тунинчен, выльăхсене пăхас тата тăрантарас ĕçе лайăх организациленинчен килет. Мĕнпур фермăсем валли заведующисен, выльăх пăхакансен, ĕне пăхакансен, конюхсен, кĕтӳçĕсен тата ытти работниксен кадрĕсене çителĕклĕ таран тупса памалла. Лашасене, пуринчен ытла пĕтĕ кĕсресене, пăхас ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнни кирлĕ.

Сентябрĕн 20-мĕшĕпе октябрĕн 1-мĕшĕ хушшинче колхозсем выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма мĕнле хатĕрленсе çитнине государство енчен тĕрĕслесе тухаççĕ. Çакă вăл колхоз фермисемшĕн пысăк экзамен пулĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен мĕнпур совет çыннисем çав экзамена чыслăн тытма тивĕçлĕ. Умри шутлă кунсенче апат-çимĕç запасĕсене ӳстерес, выльăх-чĕрлĕх çурчĕсене юсаса ăшăтас, фермăсем валли кирлĕ кадрсем тупса хурас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлесен, вĕсем çав экзамена тивĕçлипех тытаççĕ. Кострома облаçĕнчи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекенсем пуçарнă ăмăрту çав задачăсене ăнăçлă татса парас ĕçре пысăк вырăн йышăнмалла.

Уйăх çурă каярах Кубань колхозникĕсем тырпул хатĕрлемелли плана срокчен тултарассишĕн, кĕракине вăхăтра тата пысăк пахалăхлăн ирттерессишĕн Пĕтĕм Союзра социализмлă ăмăрту организацилеме чĕнсе каланăччĕ. Вĕсем чĕнсе калани çĕршывăн мĕнпур районĕсенчи миллионшар колхозникпе колхозницăна хавхалантарса çĕклерĕ. Халĕ колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекенсем ăмăртăва тухаççĕ. Вĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла вăйлатассишĕн пыракан кĕрешӳ ялавне çĕклеççĕ. Тырпул акса тăвакансем пекех, вĕсем государство умĕнчи хăйсен обязательствисене срокчен тата пĕтĕмпех тултарассишĕн кĕрешеççĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен мухтавлă совет çыннисене хăйсем пуçарнă патриотла пысăк ĕçре татăклă çитĕнӳ тума ыра сунар!

(«Правда», сентябрĕн 17-мĕшĕнчи умстатья).

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Конгресĕн членĕсем Мускавран тухса кайни

Сентябрĕн 16-мĕшĕнче Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Конгресĕн членĕсем Уильям М. Колмер, Клиффорд Р. Хоуп, Джей Ле Февр, Сид Симпсон, Джесси П. Уолкотт, Чарльз Уолвертон, Орвилл Зиммерман господинсем, çавăн пекех тата экономика политикипе вăрçă хыççăнхи планировани тĕлĕшпе ĕçлекен комитетăн тĕпчев ушкăнĕн директорĕ Мэрвей Б. Филсом господин, çар производстви бюровĕн вице-председателĕ Гарвардри университет профессорĕ У. И. Эллиот господин, Джейнс Фаррис господин тата майор Мосмиллер Мускавран тухса кайнă.

Каякансене аэродромра Наркоминделпа ВОКС представителĕсем тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен посольствин представителĕсем ăсатса янă. (ТАСС).

СССР Совнаркомĕнче

М. И. Кутузов çуралнăранпа 200 çул тултарнине уявласси çинчен

Оборона Халăх Комиссариачĕ ыйтнипе, СССР Совнаркомĕ аслă вырăс полководецĕ фельдмаршал Михаил Илларионович Кутузов çуралнăранпа 200 çул тултарнине уявлама палăртса хунă.

СССР Совнаркомĕ **çапла йышăннă:**

1. «Михаил Илларионович Кутузов (çуралнăранпа 200 çул тултарнă тĕле)» ятлă кĕнеке пичетлесе кăларас, ăна 500 пин экземпляр пичетлес.

2. 1945 çулхи сентябрь уйăхĕнче предприятисенче, колхозсенче, шкулсенче, çар чаçĕсенче М. И. Кутузов пурнăçĕпе унăн ĕçĕсем çинчен докладсемпе калаçусем туса ирттерес.

3. Центрти хаçатсемпе журналсенче М. И. Кутузов пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен калакан статьясем пичетлесе кăларас.

4. Сентябрь уйăхĕнче М. И. Кутузов çуралнăранпа 200 çул тултарнă ятпа Аслă çар академийĕн, Фрунзе ячĕпе тăракан çар академийĕн, Артиллери академийĕн тата Инженери çар академийĕн научнăй сессине ирттерес.

5. М. И. Кутузов документĕсен сборникне пичетлесе кăларас.

«Искусство» издательствине М. И. Кутузов портретне пичетлесе кăларма хушас.

6. Мускав хулинче тата Бородино хирĕнче М. И. Кутузов памятникне лартас.

7. Бородино хирĕнче М. И. Кутузовпа пĕрле ĕçленĕ Багратион тата Барклай-де-Толли памятникĕсене лартас.

8. Кутузов ячĕпе икĕ премий тăвас: пĕррремĕш степень премийĕ—50 пин тенкĕ, иккĕмĕш степень премийĕ—25 пин тенкĕ, вара вĕсене çулсеренех вăрçă çинчен çырнă наукăллă чи паллă ĕçсемшĕн парас.

9. Сентябрь уйăхĕнче кинотеатрсенче «Кутузов» ятлă фильм кăтартма хушас.

К. Д. Ушинский вилни 75 çул тултарни çинчен

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ **çапла йышăннă:**

1. Вырăссен аслă педагогĕ Константин Дмитриевич Ушинский вилни 1946 çулхи январĕн 3-мĕшĕнче 75 çул тултарнă май **К. Д. Ушинский** вилни 75 çул тултарнине паллă тума Пĕтĕм Союзри Комитет тăвас. Комитета çаксене кĕртес: В. П. Потемкина (Комитет председателĕ), В. П. Волгина, И. С. Галкина, Ф. В. Гладкова, Н. М. Головина, Б. Д. Грекова, А. М. Еголина, Г. Е. Жураковские, П. А. Капрова, С. В. Кафтанова, П. А. Константинова, К. Н. Корнилова, В. Н. Маркова, Е. Н. Медынские, И. И. Мещанинова, С. П. Обнорские, И. Ф. Свадковские, В. Я. Струминские, Н. В. Чехова, Н. Н. Яковлева.

2. **К. Д. Ушинский** вилни 75 çул тултарнине паллă туса ирттерме тунă Пĕтĕм Союзри Комитета **К. Д. Ушинские** ĕмĕр манмалла мар тумалли ĕçсене палăртса хума тата Мускавпа Ленинградра **К. Д. Ушинский** вилни 75 çул тултарнă кун чаплă ларусем туса ирттерме хушас.

3. **К. Д. Ушинский** сочиненийĕсен пуххине пичетлесе кăларас, пĕррремĕш томне 1946 çулхи январĕн 3-мĕшĕ тĕлне кăларас.

4. Ленинград хулинче **К. Д. Ушинский** памятникне лартас.

„Киров" крейсер çинче карап праçникнэ ирттерме хатĕрленеççĕ

ХĔРЛĔ ЯЛАВЛА БАЛТИКА ФЛОЧĔ, сентябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕрлĕ Ялавлă «Киров» крейсер çинче моряксем хăйсен çулсерен пулса иртекен карап праçникне ирттерме хатĕрленеççĕ. Уяв сентябрĕн 26-мĕшĕнче пулать. Çичĕ çул каярах çав крейсер çинче вăл кун чи малтанхи хут тинĕс-çар флагне çакнă. Çамрăк краснофлотецсемпе калаçусем туса ирттереççĕ. Вĕсене крейсерăн çапăçу историйĕпе кировецсен чаплă йăлисем çинчен каласа кăтартаççĕ.

Крейсер историйĕ 1941 çулта Таллин хулине хӳтĕленипе çыхăнса тăрать. Çав оборонăра «Киров», хăй çинчи тупăсемпе персе, Эстони столицине туртса илессишĕн çапăçнă нимĕç çарĕсене питĕ пысăк сиен кӳнĕ. Çавăн чухне тыткăна илнĕ гитлеровецсем каласа кăтартнă тăрăх, крейсер снарячĕсем гитлеровецсен салтакĕсене питĕ нумай вĕлерсе пĕтернĕ, нимĕçсене хăйсен операцийĕсене тума чăра-чăра лартнă. Крейсер Таллин хули тĕлĕнче çав хулана хӳтĕлесе çапăçнă юлашки кунччченех тăнă, вăл Эстони столиццинчен халăхпа пурлăха илсе тухма пулăшса тăнă.

Кировецсем Ленинграда хӳтĕленĕ чухне те паттăррăн çапăçнă.

Фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç пынă çапăçусенче çав тери вăйлă çапăçнăшăн «Киров» крейсера Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă. Çакăн пекех карап çинчи матроссемпе офицерсене нумайĕшне правительство орденĕсемпе медалĕсене парса наградăланă.

РЕСПУБЛИКА УЙХИРĔСЕНЧЕ

РЕСПУБЛИКĂРА СЕНТЯБРĔН 15-мĕшĕ ТĔЛНЕ ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАРАС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(Процентпа)

Районсем	Тырă панă
Вăрнар	60,4
Сĕнтĕрвăрри	54,7
Сĕнтĕр	53,7
Советски	49,5
Красноармейски	49,4
Етĕрне	47,9
Шупашкар	47,3
Калинино	46,5
Çĕрпӳ	46,2
Октябрьски	45,1
Пăрачкав	44,9
Чурачăк	43,5
Шăхасан	42,6
Улатăр	42,0
Елчĕк	41,7
Куславкка	41,5
Муркаш	40,3
Ишлей	39,5
Комсомольски	37,3
Первомайски	37,1
Чкаловски	36,2
Шăмăршă	36,1
Элĕк	35,1
Вăрмар	35,0
Йĕпреç	33,6
Канаш	33,3
Тăвай	28,0
Çĕмĕрле	27,2
Хĕрле Чутай	25,0
Кувакино	19,7

Тырă тăкăнать, ăна вырмаççĕ

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Правда» колхоз тĕштырăсене вырса пĕтерчĕ. Колхозра кĕлтесене капана хывас, авăн çапас ĕçсем вĕçленсе пыраççĕ. Государствăна тырă памалли графика ирттерсе тултараççĕ. Кунта ватти-вĕтти иртен пуçласа каçчен тырпул пухса кĕнĕ çĕрте ĕçлет.

«Правда» колхозпа юнашарах Киров ячĕпе тăракан колхоз вырнаçнă. Колхоз ял Советĕнче кăна мар, районра та юлса пырать. Тырпулсене пухса пĕтермен, государствăна тырă памалли графика тултарса пымасть. Колхозра ĕç дисциплини ытла та начар. Виçĕ бригадăра 300 çын шутланать. Ĕçе вара 45—50 çынран ытла тухмаççĕ. Колхозниксем уйхире 8—9 сехетре тухаççĕ, тĕттĕм пуличченех уйран таврăнаççĕ. Çавăнпа та ĕç тухăçлăхĕ начар, ĕç нормине тултарса пыракансем сахал. Колхозăн халĕ те 100 гектара яхăн вырман тырă пур. Колхозра икĕ жнейка, вĕсемпе усă курмаççĕ. Кашни бригадăрах 10—15 кĕреплеллĕ çавапа ĕçлеме пулать, анчах кунта çавапа çулмаççĕ.

Государствăна тырпул парас ĕçре юлса пынине колхоз председателĕ В. Кузнецов лашасем çителĕксĕррипе ăнлантарать. Анчах та ку тĕрĕс мар, кунта тырпула пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕç юлса пыни, чăн малтанах, ĕç дисциплини çуккинчен, ĕçе организацилеме пĕлменнинчен килет.

И. СТАКАНКИН.

Виçĕ колхозăн ăмăртăвĕ

ЕЛЧĔК. Кивĕ Эйпеç ял Советне кĕрекен «Красный партизан», «Комбайн», Пушкин ячĕпе тăракан колхозсем пĕрперинпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Ку колхозсем хушшинчи ăмăрту уйрăмах тырă пухса кĕртес вăхăтра анлăн сарăлса кайрĕ. Ăмăртура Пушкин ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ коммунист Ф. Васильев юлташ) малта пырать. Колхоз тĕштырăсене чăн малтан вырса пĕтерчĕ. Тырă вырнă вăхăтрах кĕлтесене капана хывас, авăн çапса государствăна тырă парас ĕçе тытăнчĕ. Кĕлтесене капана хывас ĕçре колхозра 10 вăкăрпа ĕçлеççĕ. 24 çынран ялан авăн çапакан бригада тунă. Ку бригада членĕсем кашниех тăпачăпа икшер центнертан кая мар тырă çапаççĕ, час-часах вĕсем çĕрле те ĕçлеççĕ. Пушкин ячĕпе тăракан колхоз государствăна тырă памалли графика ытлашшипех тултарса пырать, тырă памалли плана сентябрь уйăхĕнче пурнăçлассишĕн кĕрешет. Кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе те ăнăçлăн пуçăнчĕ, халĕ кунта кашни кунах 5—8 гектар çĕртме сухи тăваççĕ.

«Красный партизан» колхоз та тырпул пухса кĕртес енĕпе лайăх ĕçлет. Государствăна тырă леçмелли графика та ăнăçлăн пурнăçласа пырать. Тырă леçнĕ çĕрте лашасемпе те, вăкăрсемпе те усă кураççĕ.

Иртнĕ çулсемпе танлаштарсан, «Комбайн» колхозра та кăçал ĕç нумай лайăхланчĕ. Кунта ĕç дисциплини çине кирлĕ пек çаврăнса пăхрĕç, çавна пула ĕç чылай лайăхланни палăрать. Колхозниксем хире ирхине 5 сехетре тухса каçхине 9 сехетчен ĕçлеççĕ. Хиртех апатланаççĕ. Çамрăксем вара, 30 çын ытла, çĕр выртсах хирте ĕçлеççĕ. Жнейкăпа выракансем Николай Головинпа Михаил Семенов кунне 5,5 гектар выраççĕ. «Комбайн» колхозра государствăна тырă парас ĕçре 18 вăкăрпа усă кураççĕ. Анчах та «Комбайн» колхоз тырă леçмелли графика пурнăçласа пыраймасть-ха.

И. ПЕТРОВ.

„МОПР" колхозри çитменлĕхсем

ИШЛЕЙ. Тăрăн ял Советĕнчи «МОПР» колхоз тырпула вăхăтра та типтерлĕ пухса кĕртес, государствăна срокчен тырă парса татас тата кĕрхи çĕртме лайăх тăвас тĕлĕшпе Калинин ячĕпе тăракан колхозпа ăмăртăва тухнă. Анчах «МОПР» колхоз руководителĕсем ăмăрту договорĕ тунă та ун çинчен маннă. Договор тăрăх, тырă вырнă çĕрте машинăсемпе анлăн усă курмалла. Колхозра икĕ жнейка. Ку таранччен вĕсенчен пĕринпе те йĕркеллĕ ĕçлеймен. Жнейкăсене малтан тĕплĕн юсаман пирки халĕ вĕсем пĕрмаях çĕмĕрĕлсе каяççĕ. Машинăсем уйра ĕçлес вырăнне тимĕрçĕ лаççи умĕнче лараççĕ.

Çапла колхозра тырă вырас ĕç кая юлса пырать. Ĕçе хăвăртлатас тесен, çавапа çулассине тата çурлапа уйрăмшарăн вырассине йĕркелемелле. Анчах кунта уйрăм сдельщинăпа ĕçлессине йĕркелемен. Колхозниксен ĕç дисциплини те начар. Ирхине ĕçе килте апатланнă хыççăн тин тухаççĕ, кăнтăрлахи апата каллех киле кĕреççĕ. Каçхине ĕçе хĕвел аниччченех пăрахаççĕ.

Суха тăвакансен ĕç кунĕ те çавăн пекех иртет. Вĕсем тата ут таврашĕсене шыраса вăхăта нумай ирттереççĕ. Кӳлмелли хатĕрсем çитмеççĕ, пур пеккисем те юсавсăр.

Государствăна тырă вăхăтра парса татасси—колхозăн пĕррремĕш тивĕçĕ. Анчах «МОПР» колхоз тырă леçмелли графика тултарса пыраймасть. Мĕншĕн тесен кунта авăна машинăпа мар, алăпа çапаççĕ. Колхозри икĕ молотилкăна юсаса хатĕрлемен, халĕ тин итем çинче юсаççĕ. Транспорт бригадин урапиcем те тулли лавпа инçе çула тухма юрăхсăр.

Колхозри массăллă ăнлантару ĕçĕ çинчен каламалли те çук. Тырă вырнă вăхăтра юлашки хыпарсем çинчен каласа пама е стена хаçачĕ кăларма вăхăт мар тесе шутлаççĕ кунта. Çавăнпа колхозниксем юлашки хыпарсене ăçта кирлĕ унта илтеленĕ тăрăх кăна пĕлеççĕ. Стена хаçачĕ тахçантанпах тухмасть. Кăтарту хăми те ахалех çакăнса тăрать.

Колхоз председателĕ Артемьев юлташ çак çитменлĕхсене пĕтерессишĕн кĕрешмест, анчах эрех ĕçес енĕпе вара—кая юлмасть. Ăна кура бригадирсем те ĕçшĕн çунсах каймаççĕ.

КĂШКАНАР.

Агитаторсем тырпул пухса кĕртес ĕçре

ЕЛЧĔК. Аслă Пăла Тимешĕнчи агитаторсем тырпул пухса кĕме пуçланă кунсенчех хăйсен пĕтĕм ĕçне хире, колхозниксем тырă вырнă çĕре куçарчĕç. Вĕсем колхозниксем канна хушăра вĕсене хаçат-журналсем вуласа параççĕ, тĕрлĕ ыйтусемпе калаçусем ирттереççĕ. Кунсăр пуçне илемлĕ литература произведенийĕсене вуласа кăтартаççĕ.

Кашни бригадăрах боевой листоксем туса тăраççĕ. Тырпул пухса кĕртме тытăннăранпа колхозра 59 боевой листок кăларнă. Колхозра «Ворошилов» ятлă стена хаçачĕ тухса тăрать, вăл пурĕ 4 номер тухнă.

Тырă вырма тухнă малтанхи кунсенче 5-мĕш бригада тырпула кăштах тăккаласа вырни палăрчĕ. Тĕрĕслесе пăхнă тăрăх, ку бригадăри Иванова, Шахеева тата ытти хăшпĕр колхозниксем пĕр тăваткал метрта 10—12 пучах тăккаласа хăварнă. Бригадăри агитаторсем çакăн çинчен çийĕнчех боевой листок çине çырса кăларчĕç. Ун хыççăн ку бригадăра тырпула тăккаланипе кĕрешес ĕç чылай лайăхланчĕ.

Колхозра хисеп хăми пур, унта кашни кунах стахановецсене çырса пыратпăр. Бригадăсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пырас шутпа кăтарту хăми турăмăр.

Агитаторсенчен уйрăмăнах шкул директорĕ коммунист С. Портнов пысăк авторитетпа усă курать.

Вăл колхозниксене ăнланмалла каласа парать, хăйĕн калаçăвне яланах вырăнти примерсемпе çирĕплетет. Çавна пула ăна пур колхозниксем те юратса итлеççĕ. Çавăн пекех Щербакова, Иванов, Зайцев агитаторсем те агитаци ĕçне тимлĕн туса пыраççĕ. Вĕсем тырă вырнă çĕрти паха опытсемпе çитменлĕхсене колхозниксем патне çийĕнчех çитереççĕ.

Агитаторсем хирте тăрăшса ĕçлени сая каймарĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз кăçал та, ытти çулсенчи пекех, кĕрхи тырăсене 6—7 ĕç кунĕнче, çуртыррисене 7 ĕçкунĕнче тата пысăк пахалăхлăн вырса пĕтерчĕ. Кĕрхи тырра 316 гектар çине сеялкăсемпе акса хăварчĕ. Августăн 26-мĕшĕнчен пуçласа çуртыррисене çапма тытăнчĕ. Государствăна тырпул памалли графика колхоз ăнăçлăн пурнăçласа пырать. Хатĕрлев пунктне тырă леçнĕ çĕрте 24 вăкăрпа ĕçлеççĕ. Колхоз председателĕ пулса орденоносец Зайцев юлташ ĕçлет. Вăл хăйĕн пĕтĕм вăйне колхоза çирĕплетес ĕçе парать.

Н. ЕМЕЛЬЯНОВ.
Вулав çурчĕн заведующийĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Шупашкар хулинчи нумай ачаллă амăшĕсене „Ача амăшĕн мухтавĕ" ятлă орденпа тата „Ача амăшĕсен медалĕ" ятлă медальпе наградăласси çинчен

СССР Верховный Совет Президиумĕн 1944 çулхи августăн 18-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх, СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ ячĕпе çаксене наградăлас:

Çичĕ ача çуратса пăхса ӳстернĕ амăшĕсене

«АЧА АМĂШĔН МУХТАВĔ» ЯТЛĂ 3-мĕш СТЕПЕНЬ ОРДЕНПА

1. Евдокия Игнатьевна **Сергеевăна** — килхуçи хĕрарăмне.
2. Анна Егоровна **Старовăна** — килхуçи хĕрарăмне.

Ултă ача çуратса пăхса ӳстернĕ амăшĕсене

«АЧА АМĂШĔСЕН МЕДАЛĔ» ЯТЛĂ 1-мĕш СТЕПЕНЬ МЕДАЛЬПЕ

1. Александра Михайловна **Вантеевăна** —килхуçи хĕрарăмне.
2. Елизавета Федоровна **Головунинăна** — килхуçи хĕрарăмне.
3. Марфа Николаевна **Даниловăна** — килхуçи хĕрарăмне.
4. Мария Артемьевна **Евсеевăна** — килхуçи хĕрарăмне.
5. Анастасия Ивановна **Ивановăна** — килхуçи хĕрарăмне.
6. Мария Александровна **Мальгинăна**—килхуçи хĕрарăмне.
7. Мария Степановна **Степановăна**—килхуçи хĕрарăмне.

Пилĕк ача çуратса пăхса ӳстернĕ амăшĕсене

«АЧА АМĂШĔСЕН МЕДАЛĔ» ЯТЛĂ 2-мĕш СТЕПЕНЬ МЕДАЛЬПЕ

1. Агриппина Михайловна **Багрянскаяна** —килхуçи хĕрарăмне.
2. Вера Михайловна **Журавлевăна** — арçын ачасен 11-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕнчи учительницăна.
3. Мария Николаевна **Рукавишниковăна**—килхуçи хĕрарăмне.
4. Перасковья Терентьевна **Столяровăна** —килхуçи хĕрарăмне.
5. Ольга Андреевна **Шалягинăна** — килхуçи хĕрарăмне.
6. Екатерина Филипповна **Паргунькинăна**—килхуçи хĕрарăмне.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1945 çулхи августăн 28-мĕшĕ.

Фильăра „Кутузов пӳртне" уçни

Тĕпренех юсанă хыççăн 1812-мĕш çулхи Отечественнăй вăрçăн питĕ паллă памятникĕсенчен пĕрне «Фильăри пӳрте» уçнă. Çав пӳртре Кутузов ертсе пынипе чаплă çар совечĕ пулса иртнĕ.

Ирхине 11 сехет тĕлне Фильăра Киев районĕнчи ĕççыннисем темиçе çĕр çын пухăннă. «Кутузов пӳрчĕ» умĕнче хитре чечексен клумбисем. Çав клумбăсем хушшинче пирпе витнĕ Кутузов кĕлетки, ăна халăх художникĕ С. Меркулов ертсе пынипе тунă.

Памятника уçма Киев районĕнчи партипе совет организацийĕсен руководителĕсем, Мускав хули коменданчĕ К. Р. Синилов генерал-лейтенант, СССР Наука академийĕн представителĕсем тата ыттисем те пынă.

Савăнăçлă митинг пуçланнă, ăна ĕççынни депутачĕсен Киев райсовечĕн председателĕ Кузнецов юлташ уçнă. Отечественнăй аслă вăрçă участникĕ Минин юлташ Кутузов фельдмаршалăн бронзăран тунă кĕлетки çинчен ăна витнĕ пире сирсе илнĕ.

Трибуна çинче çаксем сăмах тухса каланă: академик Греков, РСФСР Совнаркомĕ çумĕнчи Çутĕç учрежденийĕсен комитечĕн Музей управленийĕн начальникĕ Серебрянников юлташ, Отечественнăй вăрçă участникĕ Минин юлташ, Кутузовăн тăваттăмĕш сыпăкри икĕ тăванĕ тата парти райкомĕн секретарĕ Родионов юлташ. Митинг пĕтнĕ. Тăватă çул иртнĕ хыççăн кунта малтанхи хут халăха пырса курма историллĕ пӳрт алăкĕсем уçăлнă. (ТАСС)

М. И. Кутузов ячĕпе почта маркисем кăларни

СССР Çыхăну Халăх Комиссариачĕ аслă вырăс полководецĕ М. И. Кутузов çуралнăранпа 200 çул тултарнă ятпа почта маркисем кăларнă.

Çĕнĕ маркăсене икĕ тĕслĕ сăрпа пичетлесе кăларнă. (ТАСС).

Совет çарĕсене Норвеги çĕршывĕнчен илсе тухасси çинчен

Демобилизаци пуçланнă май совет çарĕсене Норвеги çĕршывĕнчен куçараççĕ. Совет çарĕсене Норвегирен илсе тухма пуçланă та ĕнтĕ. (ТАСС).

Укçа-тенкĕ пухас ĕçе вайсăрлатнă

МУРКАШ. Район юлашки вăхăтра укçа-тенкĕ пухас ĕçе сÿрĕклетрĕ. III-мĕш квартал планне сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 68,8 процент тултарнă. Унтанпа ÿсĕм пысăк мар.

Районри Атапай, Пашалукасси тата Ярапайкасси ял Совечĕсем кăна укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе йĕркеллĕ ĕçлеççĕ. Чылай ял Совечĕсем вара юлса пыраççĕ. Шетмĕ, Тивĕш, Янăш, Панкли тата Матьăк ял Совечĕсем квартал планне 10—25 процент çеç тултарнă.

Çак ял Совечĕсем юлса пыни унта укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе пачах та ĕçлеменнинчен килет. Ял Совет председателĕсем, финанс агенчĕсем тата ялти актив укçа-тенкĕне вăхăтра пухма кирли çинчен маннă. Хăшпĕр колхоз председателĕсем хăйсем те налог парăмĕсене тÿлемеççĕ. Матьăк ял Советĕнчи «Труд» колхоз председателĕ Семенов, Шетмĕпуç ял Советĕнчи «Звезда» колхоз председателĕ Федоров, «25 лет Чувашии» колхоз председателĕ Николаев тата Кутузов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Волков вăрçă вăхăтĕнчи налога тÿлесе татман.

Районри финанс пайĕн работникĕсем хăйсем те укçа-тенкĕ пухас ĕçе кирлĕ пек ертсе пымаççĕ.

Кун пек ĕçлесен, Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавĕ Муркаш районĕнчен вĕçерĕнме те пултарать.

Ф. МАЛЫШКИН.

Шкул ĕçне япăхтарнă

ЕТĔРНЕ. Кăташри пуçламĕш шкул çĕнĕ вĕренÿ çулне çулсеренех хатĕрленмесĕр кĕтсе илет. Çак юлашки 3 çул хушшинче шкул çуртне пĕрре те юсаман. Шкул картисемпе хапхисем тÿнетÿне кайнă, чÿречисем çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ, кантăкĕсем те ванчăк. Вĕренÿ çулне хатĕрленмелли чи хĕрÿ вăхăтра шкул заведующийĕ А. Ижеева канмалли çурта тухса кайрĕ. Çапла вара шкул кăçалхи çул та ытти çулсенчи пекех вĕренÿ çулне пачах хатĕрленмесĕр кĕтсе илчĕ. Вĕренекенсем шкула япăх çÿреççĕ, пионер отрячĕсем ĕçлемеççĕ.

Шкул ĕçне япăхтарса янăшăн шкул заведующийне Ижеева юлташа иртнĕ çул комсомолтан кăларнă. Анчах районри çутĕç пайĕ (заведующийĕ Мартяшев) ку тарана çитсе те ăна шкул заведующинчех тытса тăрать, шкул ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе нимĕнле мера та йышăнмасть.

Н. ЦВЕТКОВ.

Хĕрлĕ Ялавлă колхозра

ОКТЯБРЬСКОЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Чечейкассинчи «Аниш» колхозра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне илнĕ чухне колхозниксем выльăх-чĕрлĕх йышне тата унăн тухăçлăхне ÿстерме обязательство илчĕç. Халĕ колхозниксем хăйсен сăмахне чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. Колхоз фермисенче ĕнесем, кайăк-кĕшĕк йышлăн çитĕнет. Колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур выльăхсем енĕпе те ытлашшипех тултарнă. Кайăк-кĕшĕк ĕрчетес енĕпе колхоз уйрăмăнах лайăх ĕçлет — плана 183 процент тултарнă.

Колхоз выльăх-чĕрлĕх йышне ÿстернипе пĕрлех, ăна хĕл каçарма та хатĕрленет. Кунта выльăх-чĕрлĕх витисене вĕçех çĕнĕрен юсанă, апат çителĕклĕ хатĕрленĕ. Ку таранччен 40 тонна силос хывнă, 215 мăшăр вĕлтрен милĕкĕ хатĕрленĕ, 5 центнер армути типĕтнĕ.

Колхоз выльăх-чĕрлĕхрен çулсеренех пысăк тупăш илет. 1945 çулшăн государствăна аш-какай тата ытти продуктсене пĕтĕмĕшпех парса татрĕ.

Н. АНДРЕЕВ.

Пĕчĕк фельетон

Сĕнтĕрвăрри мыскари

Сĕнтĕрвăрри хулине пырса кĕрсен, паллах, чи малтан колхозник çуртне шыраса тупатăн. Ăçта та пулин выртса тăрас пулать-çке-ха. Манăн та колхозник çуртне каймалла пулчĕ.

Пырса кĕтĕм хайхи. Нÿхрепе аннă пек — пăч тĕттĕм. Икĕ хутлă пĕтĕм çурчĕпе те пĕр лампа çеç çунать.

— Сирĕн паян çеç тĕттĕм-и капла?— ыйтатăп хăюсăррăн, кĕсьерен паспорт кăларса.

— Çук, пирĕн яланах çакăн пек тĕттĕм,—ответлет техничка, — краççин паманнипе хăй çутаймасăрах ларатпăр. Пĕлтĕр, çавăн пек, 30 литр хамăн краççина çунтарса ятăм та спасипине те илтеймерĕм.

Мĕн тăвас тетĕн, тĕттĕм пÿлĕмех кĕрсе выртмалла пулчĕ вара. Çĕр иркелерĕ çапла...

Ирхине тăрсан, пит çума шутларăм. Умывальник кухньăра, терĕç. Кухньăна кĕтĕм. Умывальник тĕпĕнче чышкă кĕрес пек шăтăк пулнă пирки шывĕ шапăрах юхса тухрĕ. Шыва çăвара сыпкаласа, пит-куçа аран-аран йĕпеткелесе илтĕм.

— Пĕррелĕхе пырĕ-çке, — йăпататăп хама хам,—çул çинчен çавах мунчана каяс пулать, мунчара лайăхрах çăвăнăп.

Çапла шутласа мунчана тухса кайма хатĕрленетĕп. Анчах кунта та мана инкек кĕтет иккен. Сĕнтĕрвăрринче хула мунчи пур, анчах унăн уссийĕ çук. Вăл мунчана юлашки хут хăçан хутса кĕнине манса та кайнă хула çыннисем. Çапла вара хула мунчи тăтăшах хупăнса тăрать, «ремонт тăваççĕ» имĕш.

— Пĕррелĕхе мунчасăр та юрĕ ĕнтĕ,— шутларăм ăшăмра.—Шупашкара çитсен те мунча кĕрĕп-ха...

Хулапа паллашас шутпа урама тухатăн. Пĕр самант хушши Атăл çине пăхса тăратăн. Вăл та часах йăлăхтарать: çулла мар-çке-ха, Атăлтан сивĕ çил вĕрет.

Ленин урамĕн Атăл хĕрринчи кĕтессинче ларакан пысăк шурă çурт куç тĕлне пулчĕ. Ку—районри соцкультура çурчĕ. Ку çуртăн директорĕ те пур иккен, анчах мĕн ĕçлет-ха çав директор? Хула çыннисем соцкультура çурчĕн ĕçне пит сахал кураççĕ.

Хаяр чĕлхесем каланă тăрăх, соцкультура çурчĕн директорĕ Корский пулă тытас ĕçпе интересленет иккен. Кĕскен каласан, пулăç. Мĕн калесси пур—лайăх япала вăл, кÿлĕ е Атăл хĕрринче пулă тытса ларасси. Вăлтапа-и унта, атмапа-и, е тата урăх йышши хатĕрпе? Ларатăн та, карассемпе картташсене турта-турта кăларатăн, хушăран çăрттанĕ те леккелет. Унтан—пулă шÿрпи. Мĕн мар пурнăç!

Çĕрĕпе куç хупса курмасăр пулă тытакан директорăн кăнтăрла вара... ыйхă килет, пуç ыратать, сывăрас пулать. Сывăрмасăр кам пурăнтăр-ха, чăнах?

Çапла иртерет соцкультура çурчĕн директорĕ хăйĕн пурнăçне. Уйăхра пĕр-икĕ хут кино пулни кăна унăн лăпкă пурнăçне хускатать. Анчах Сĕнтĕрвăрринче кино кăтартни мыскара анчах, кино мар.

Акă, сентябрĕн 5-мĕшĕнче кино пулать, «Гроза» кăтартаççĕ тесе пĕлтерчĕç. 9 сехетре пуçланмалла. Халăх пухăнма тытăнчĕ, билетсем те сутаççĕ. Унччен те пулмарĕ, кинора çутă лап! сÿнсе ларчĕ. Фойэри халăх хумханма пуçларĕ.

— Кино пулмасть, куратăр пулĕ, çутă — илтĕнеççĕ сасăсем тĕттĕмре.

Пĕр хĕрарăм тухрĕ те:

— Кино пулмасть, куратăр пулĕ, çутă пĕтрĕ,—терĕ.

— Укçа? Укçине хăçан тавăрса паратăр?

— Ыран килĕр, ыран кăтартăпăр паянхи выранне.

«Ыран» тени те çитрĕ, кино çаплах пулмарĕ.

Кам «ăшă сăмах» калĕ-ши Сĕнтĕрвăрринчи çав мыскараçăсене?

И. САЛАМБЕК.

Вăрнар поселокĕнче кăçал хĕл пулать-ши?

Комсомольская урамри 19-мĕш номерлĕ çурт уйрăмах паларса тăрать: картиш пĕтĕмпех япăхса кайнă, пĕр сыпă юсавлă карта та юлман. Пÿртум алăкĕ чалăшса кайнă, уçса хупма та май çук. Пÿрт тăрри çĕрсе шăтса пĕтнĕ. Çакă вăл— Вăрнар поселок Совечĕн коммунальнăй çурчĕ. Унта Хĕрлĕ Çар командирĕн çемьи пурăнать.

Эпир пÿртĕн ăшчиккине те кĕрсе куртăмăр. Кунта татах та ытларах çитменлĕхсем курма тиврĕ. Кăмака çÿлтен пуçласа аяла çитиччен темиçе çĕртен çурăлса аннă, пачах хутма юрамасть. Чÿрече янахĕсем çĕрсе тухса ÿкнĕ, тулта сивĕ персе тăрать. Пÿртĕн икĕ кĕтессинче те пĕренесем çĕрсе пĕтнĕ, вĕсенчен çаплипех тулти çутă куранать. Урай хăмисем те çĕрсе шăтнă, çавăнпа вĕсене çиелтен чус хăмисемпе сапласа тухнă.

— Ку урай хăмисене çиелтен хам сапласа тухрăм-ха,—тесе каласа парать çак çуртра хваттерте пурăнакан О. Шулова юлташ. — Çумăр çунă хушăра урайне савăт-сапасем лартса тухатпăр, хамăр вара çумăр анман кĕтессе пуçтарăнса тăратпăр,—тет вăл малалла.

Питĕ шел, хăй вăхăтĕнче лайăх пулнă çурта, вăхăтра юсаса тăман пирки, пĕтĕмпех япăхтарса янă.

— Мĕн калас... Эпир ку çуртра 10 çул пурăнатпăр ĕнтĕ. Çав хушăра поселок Совечĕ çурта пĕр хут та юсаман. Çак юлашки 4—5 çул хушшинче вара юсас пирки мĕн чухлĕ каламан пулĕ, анчах çурта юсасси çинчен çаплах шутламаççĕ. Çак таранччен «вăрçă» сăмахпа лăплантарса пурăнчĕç, халĕ вăрçă чарăннă хыççăн сăлтавĕ йывăç тата кирпĕч çукки çине куçрĕ,—тет Шулова юлташ.

Поселок Совечĕн председателĕ Минеев юлташа çакна калас пулать: тĕпрен ремонт тумасăр çуртра малашне çын пурăнма пултараймасть. Хĕллехи вăхăтра мар, унта çуллахи вăхăтра та пурăнма çук.

Ленин урамĕнчи 29-мĕш номерлĕ çурт. Ку виçĕ хваттерлĕ çуртăн пĕр хваттерĕнче çар çынни пурăннă. Халĕ унта Фронтра вилнĕ çыннăн çемьи, пенсионерка М. Цетянина пурăнать. Хăйпе пĕрле унăн 4 ача. Ку хваттерте кăмака ишĕлсе анни темиçе уйăх ытла ĕнтĕ. Кăмака юсаттарас тесе М. Цетянина юлташ поселок Советне темиçе хутчен те çитнĕ, анчах кăмака халь те юсавлă мар.

Кун пек тĕслĕхсене ытти урамсенче те тĕл пулма пулать.

Вăрнар поселок Совечĕн коммунальнăй çурчĕсем 19 шутланаççĕ. Вĕсенче районри предприятисемпе учрежденисенче ĕçлекен работниксем тата çар çыннисен çемьисем пурăнаççĕ. Кашниннех вĕсенчен поселок Совечĕ хваттер укçипе уйăхран уйăхах илсе тăрать, анчах вĕсем мĕнле условисенче пурăннипе пачах та интересленмест, çуртйĕр юсама уйăрнă 31 пин тенкĕ укçана та çак тарана çитсе пĕр пус та расходламан.

Хĕллехи сивĕсем те часах килсе çитĕç. Анчах ыйтасчĕ: мĕн тунă-ши поселок Совечĕ хĕле хатĕрленес тата пурăнмалли çуртйĕрсене юсас тĕлĕшпе?

Е. ВОЛКОВ.

Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен Совечĕн секретариачĕ пĕлтерни

ЛОНДОН, сентябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви хале Лондонра ĕçлекен Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен Совечĕн секретариачĕ сентябрĕн 15-мĕшĕнче каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерĕве панă.

Пĕлтерÿре çапла каланă: Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен Совечĕ сентябрĕн 15-мĕшĕнче кăнтăрла хăйĕн пиллĕкмĕш ларăвне иртттернĕ. Ларăва Франци Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Жорж Бидо председатель пулса ертсе пынă.

Советăн çитес ларăвĕ сентябрĕн 17-мĕшĕнче ирхине 11 сехетре пулать.

Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен Совечĕ Польшăна, Украинăна тата Белоруссие Италипе мир тумалли договор пирки хăйсен шухăшĕсене хут çине çырса пама сĕнпе çĕршывсен списокне кĕртме килĕшнĕ.

Юлашки икĕ ларура Совет пуринчен ытла Итали колонийĕсем çинчен сÿтсе явнă. Вара сентябрĕн 15-мĕшĕнчи ларура çав ыйтăва ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен заместителĕсене пама йышăннă. Вĕсем çак ыйтăва тĕплĕн пăхса тухнă чухне Пĕрлешÿллĕ Штатсен делегацийĕ тăратнă планпа туллин усă курмалла тата ытти делегацисем пĕлтернĕ шухăшсене те шута илмелле.

Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен заместителĕсене хăйсен рекомендацийĕсепе Совет ларăвĕнче пăхса тухма Советăн иккĕмĕш сессине пухиччен икĕ эрне маларах тăратма хушнă. Советăн иккĕмĕш сессийĕ хăçан пухăнасси çинчен каярах па йышăнаççĕ.

АНГЛИ ПРЕМЬЕР-МИНИСТРĔ ЭТТЛИ ПАТĔНЧЕ ПУЛСА ИРТНĔ ЙЫШĂНУ

ЛОНДОН, сентябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: сентябрĕн 14-мĕшĕнче Англи премьер-министрĕ Эттли патĕнче апатлану пулса иртнĕ. Апатланура СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ Молотов, Совет Союзĕн Англири посолĕ Гусев, Англин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Бевин тата Англии Совет Союзĕнчи посолĕ Арчибальд Кларк Керр пулнă.

ЯПОНЕЦСЕН «ХУРА ДРАКОН» ЯТЛĂ ОБЩЕСТВИНЕ САЛАТСА ЯНĂ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Колумби ятлă радио саракан компани панă пĕлтерÿре çапла каланă: сентябрĕн 12-мĕшĕнче Макартур генерал Япони написчĕсен «Хура дракон» ятлă обществине салатса яма приказ панă. Обществăна ертсе пыракан çичĕ çынна тытса хупма хушнă.

ЯПОНИРИ ГИТЛЕРОВЕЦСЕН БАНДИ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). «Крисчен сайенс Монитор» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Токио хулинче пĕр ушкăн гитлеровец пурăнать. Вĕсем питĕ чаплă условисенче пурăнаççĕ. Германи рейдерĕсем союзниксенчен тытса илнĕ апат-çимĕçпе тăранса пурăнаççĕ. Гитлеровецсем хушшинче Японири, Китайри тата Маньчжурири гитлеровецсен руководителĕ Франц Шпахн тата рейдерсен командующийĕ Франц Веннекер генерал пур.

Япони паранă хыççăн гитлеровецсем митинг пухнă та эпир гитлеризма «пăрахатпăр» тесе каланă.

Нимĕçсен Японири колонийĕнче паллă гитлеровецсемсĕр пусне нумай профессорсем, музыкантсем тата Японире нумайранпа пурăнакан ытти çынсем тă.нă. Вĕсене пурне те гестапо пуçлăхĕ Мейзингер контроллесе тăнă, Мейзингер Японин вăрттăн ĕçлекен полицийĕпе килĕштерсе ĕçленĕ.

АМЕРИКА ХАÇАЧĔ СОВЕТ СОЮЗĔНЧИ ÇИТĔНÿСЕМ ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). «Реджистер» ятлă хаçат хăйĕн умстатьинче совет учрежденийĕсем ялхуçалăх тĕлĕшпе тунă çитĕнÿсене питĕ пысăка хурса сырать, çавăн пекех вăл Совет Союзĕнче литература, музыка тата философи тĕлĕшпе тунă çитĕнÿсене те питĕ пысăка хурса мухтаса çырать. Хаçат çакна астутарать: Совет Союзĕ çинчен Америкăра ку таранччен тĕрĕс пĕлсе тăман, тет. Вара хаçат малалла çапла çырать:

«Россия çирĕплĕхпе паттăрлăха пĕлтерекен çĕршыв пулса тăрать. Вырăссем кĕрешÿре паттăр пулни пирĕншĕн хаклă. Американецсем Россия ĕçĕсемпе хавхалански савăнни тĕрĕс ĕç пулчĕ. Пирĕн Российăпа килĕшсе ĕçлесе пымалла, мĕншĕн тесен Россия тĕнчери чи хăватлă вайсенчен пĕри пулса тăрать.

АРГЕНТИНĂРИ ЗАБАСТОВКĂСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, темиçе кун каярах транспортра ĕçлекен 35 пин рабочи забастовка пуçласа янă. Аргентинăн çар министрĕ Перона çав рабочисене ĕçе тухма приказ панă. Анчах рабочисем вăл приказа итлемен. Вĕсем ĕçукçине ÿстерме тата ĕç кунне кĕскетме ыйтаççĕ.

Аргентинăра медицина тĕлĕшпе ĕçлекен общество наука работникĕсене наука тĕлĕшпе ĕçлеме чарăнма хушнă. Хăçан та хăçан пирĕн çĕршывра тивĕçлĕ конституци йĕркине пурнăçа кĕртме пуçлĕç, çавăн чухне тин ĕçлеме пуçлăпăр, тесе ченнĕ çав общество. Çак кунсенчех Аргентинăри адвокатсем те медицина работникĕсем пек тума йышăннă.

КАНАДĂРА ФОРД ЗАВОЧĔСЕНЧЕ ЗАБАСТОВКА ПУÇЛАННĂ

ОТТАВА, сентябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Канадиен Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, «Форд» компанийĕн Виндзор хулинчи заводĕнче 10 пин рабочи сентябрĕн 13-мĕшĕнче забастовка пуçласа янă. Профсоюз ĕçе сыхлас йĕркене туса хума, ĕçукçине тĕрĕссипе тÿлеме, отпуска кайнă чух отпуск вăхăчĕшĕн укçа тÿлеме, виçĕ пин рабочие, предприятисенчен кăларса янăскерсене, пулăшу пама ыйтать. Профсоюз ытти ыйтусем те кăларса тăратнă.

ДЕТРОЙТ ХУЛИНЧЕ ФОРД ЗАВОЧĔСЕНЕ ХУПНĂ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Фордăн автомобиль компанийĕ автомобильсем тума пăрахнă. 50.000 рабочие ĕçрен кăларса янă. Детройт хулинчи хăйĕн мĕнпур завочĕсене хупнă. Компани руководителĕ—çав заводсене автомобиль пайĕсем парса тăракан заводсенчи рабочисем забастовка тунă пирки хупнă, тесе ăнлантарса панă.

Ассошиэйтед пресс агентстви çакна палăртать: Форд автомобильсем тума автомобиль промышленноçĕнчи рабочисен профсоюзĕ çав промышленноçри рабочисен ĕçукçине ÿстермешкĕн ыйтма пуçланă кун пăрахнă. «Нью-Йорк таймс» хаçат çапла çырать: Детройтри ĕçсем малашне лару-тăру начарланса каяссине пĕлтереççĕ, тет. Рабочисен лидерĕсем рабочисемпе предпринимательсем хушшинчи çыхăнусенче пысăк кризис пуçланса каяссине шута илеççĕ.

«ÇĔНТЕРÿ» ОРДЕНПА НАГРАДĂЛАНĂ МАЙ ТИТО МАРШАЛА САЛАМЛАНИ

БЕЛГРАД, сентябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Тито маршала «Çĕнтерÿ» орденпа награ- дăланипе Югославире çав тери савăнса кĕтсе илнĕ. Тито маршал ячĕпе Югославин тĕрлĕ вырăнĕсенчен салам янă телеграммăсем нумай килеççĕ.

СОВЕТ ÇАРĔСЕНЕ НОРВЕГИРЕН КĂЛАРСА КАЙМА ТЫТĂННИ ÇИНЧЕН НОРВЕГИ ХАÇАЧĔ ÇЫРНИ

ОСЛО, сентябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). «Афтенпостен» хаçат Совет çарĕсене Норвегирен кăларса кайма тытăнни çинчен калакан хыпара ăнлантарса панă май çапла çырать:

«Вырăссем пирĕн пата пуринчен малтан килчĕç, вĕсем пуринчен маларах пирĕн çĕршывран тухса каяççĕ. Вырăс çарĕсем мĕн кирлине тунă хыççăн пирĕн патран каяççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем хăйсен çĕршывĕнче çĕнĕ задачăсене пурнăçлама кирлĕ. Вырăссем çакна пĕлсе кайччăр: вĕсене туслă халăх ăсатса ярать. Норвеги халăхĕ вырăссем пирĕншĕн тунă ырă ĕçе нихăçан та манмĕ. Норвеги халăхĕ тата хăйшĕн те, тăшмана çĕнтерессишĕн те вырăссем тунă ĕçсене нихăçан та манас çук».

ВЕНГРИРЕ ЭСЭСОВЕЦСЕМПЕ ФОЛЬКСБУНДОВЕЦСЕНЕ ТЫТСА ХУПНИ

БУДАПЕШТ, сентябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). «Сабад Шаг» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Мăн Будапешт районĕнчи пĕр поселокра Венгри полицийĕ эсэсовецсем тата фольксбундовецсем пулнă çынсене хупăрласа илнĕ.

Полицире ĕçлекен 300 çын çĕрле çав поселока хупăрласа илнĕ те документсене тĕрĕслеме тытăннă. Темиçе эсэсовец, тарма хăтланса, полици çыннисене пенĕ. Кунти Кварталсенче чылайĕшĕнче полици нимĕçсем çаратнă пурлăха нумай тупнă.

Хупăрласа илнĕ вăхăтра 28 фольксбундовецпа эсэсовеца тытса хупнă, вĕсене пурне те Терекбалингски лагере янă, унтан вĕсене пурне те ĕç лагерĕсене яраççĕ.

АВСТРИ ПРАВИТЕЛЬСТВИН ĔÇĔСЕМ

ВЕНА, сентябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Социальнăй обеспечени государство секретарĕ Бем доклачĕ тăрăх Австри правительстви закон йышăннă. Çав законра хуçалăх аппаратне гитлеровецсенчен пĕтĕмпех тасатмалли çинчен каланă. Çав законопроекта министерствăсем, профсоюзсем тата предпринимательсен организацийĕсем тĕплĕн сÿтсе-явнă. Вăл закон тĕлĕшпе пурте калаçса татăлнă. Хуçалăх аппаратне нацистсенчен тасатас ĕçе фабрикăпа завод комитечĕсен хутшăнмалла. Вăл закона пăснăшăн 5.000 маркăлăх штраф тÿлеттереççĕ, е 3 уйăх таран тĕрмене хупаççĕ е ытти тĕрлĕ наказани пареççĕ.

Шалти ĕçсен государство секретарĕ тунă доклад тăрăх çынсене Австри паспорчĕсем памалли çинчен калакан закона йышăннă.

КĂНТĂР ТИРОЛЬТЕ НИМĔÇСЕН ÇАР ÇЫННИСЕМ ИРĔКРЕХ ÇÿРЕÇÇĔ

РИМ, сентябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Анса агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Тури Адиджере (Кăнтăр Тироль) нимĕçсен çар çыннисем халĕ те хуларан хулана куçса çÿреççĕ. Куçса çÿренĕ чухне вĕсем хăйсен автомобилĕсемпе усă кураççĕ.

ЧЕРЧИЛЛЬ ТРИЕСТА КАЙНИ

РИМ, сентябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 10-мĕшĕнче союзниксен çарĕсене пăхса тухмашкăн Александер маршал Триеста пынă. «Джорнале дель Маттино» пĕлтернĕ тăрăх, Александерпа пĕрле Триеста Черчилльпе Кеннигхем адмирал пынă. Хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Черчилль Англи çарĕсен командующийĕпе Гардинг генералпа тата çак зонăри Югослави çарĕсен командующийĕпе курнăçса калаçнă.

КĔСКЕН

Сентябрĕн 16-мĕшĕнче Люнбургра гитлеровецсен Бельзенри концентрациллĕ лагерĕн начальникĕ пулнă Крамера тата унпа пĕр шутлисене 45 çынна суд тума пуçлаççĕ. Суд лагерьте пулса вилĕмрен çăлăнса юлнă 20 çын свидетель пулса тухса каламалла. (ТАСС).

Пирĕн промышленность ĕçĕнче пулакан çитменлĕхсем пирки

1. ТАВАРĂН ХАЙНЕ ЛАРАКАН ХАКĔ

Предприятисен финанс хуçалăхĕпе хуçалăх расчечĕ мĕнле пулассиi таварăн хăйне ларакан хакĕпе накоплени планне мĕнле пурнăçласа пынинчен килет. Тавар хакĕпе накоплени планне ăнăçлăн тултарса пырсан, предприяти хăйĕн ĕçĕнчен ытларах тупăш курать, вăл укçа-тенкĕ тĕлĕшпе те пуянрах пулать.

Пирĕн республикăри хăшпĕр предприятисем таварăн хăйне ларакан хакĕн планне йĕркеллĕ пурнăçласа пымаççĕ. Кунта эпир çав çитменлĕх мĕнрен килнине тишкерсе тухасшăн.

Таварăн хăйне ларакан хакĕн планне Вăрман промышленность Халăх Комиссарiачĕн предприятийĕсем уйрăмах пăсса ĕçлеççĕ. Вĕсен 1944 çулта хăшпĕр таварсен хакне 2.5 процентран пуçласа 12.5 процент таран чакармалла пулнă. Анчах та вĕсем çавăн чухлĕ чакарас вырăнне, 1943 çулхипе танлаштарсан, 12—27 процент чухлĕ ÿстернĕ. Иртнĕ çулта Наркомлес предприятийĕсем туса кăларнă мĕнпур таварсен хакĕ планпа пăхнинчен 4.394 пин тенкĕ хаклăраха ларнă.

Мĕнрен килнĕ-ха çакă? Чи малтанах, производство планне тултарманнинчен килнĕ. Наркомлес предприятийĕсем иртнĕ çулхи производство планне 73 процент çеç тултарчĕç. Иккĕмĕшĕнчен, вĕсен автопаркĕ начар ĕçлет. Пĕр кубометр йывăç турттарса тухма 21 тенкĕ те 63 пус тăмалла. Автопарк начар ĕçленĕ пирки 39 тенкĕ те 8 пус тăкакласçĕ.

Таварăн хакĕ ÿсесси йывăçран продукци сахал кăларнинчен те, хуçасăрла тыткаланине пула йывăçа сая янинчен те килет. Упсăр пуçне Наркомлес предприятийĕсем хăйсен обязательствисене вăхăтра пурнăçласа пыманшăн темиçе пин тенкĕ штраф тÿленĕ. Çаксем пурте таварăн хăйне ларакан хакне ÿстернĕ.

Таварăн хăйне ларакан хакне чакарас тĕлĕшпе Наркомлес предприятийĕсем кăçал та çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Çирĕпрех предприятисем те 1-мĕш кварталта 250 пин тенкĕ тупăш парас вырăнне 50 пин тенкĕ кăна тупăш панă.

Шупашкарти пир-авăр фабрики 1944 çулхи производство планне 32.6 процент кăна тултарчĕ. Çакă вăл, пуринчен ытла, электроэнерги çителĕксĕр пулнинчен килнĕ. Анчах фабрикăран хăйĕн килекен сăлтавсем те пулнă. Иртнĕ çулта фабрикăна юсаса çитермен, çак ĕçе 127 пин тенкĕ тăкаклас вырăнне 32 пин тенкĕ çеç тăкакланă. Оборудованисем енĕпе те планпа палăртнинчен 3 хут сахалрах тăкакланă.

Фабрика хăйĕн çулталăкри отчечĕ çинче çакна перекетленĕ укçа шутне кĕртет. Анчах та çак «перекет» производство планне тултарма, таварăн хăйне ларакан хакне йÿнетме пулăшман. Иртнĕ çулта фабрика туса кăларнă продукци планпа пăхнинчен 44 процент чухлĕ хаклăраха ларнă. Фабрикăра чĕртавара хуçасăрла тыткалани, унран продукци сахал кăларни—тавар хакне хăпартать.

Чĕртавара ытлашши тăкаклани Шупашкарти чăлха фабрикинче те пулнă. Фабрика 11 тонна çипе ытлашши тăкакланă. Сакăр пирки фабрика 108 пин тенкĕ тăкак тÿснĕ. Чĕртавара çавăн пек хуçасăрла тыткаласан, продукци планпа пăхнă хака ăçтан лартăр-ха вара?

Иртнĕ çулта Çĕмĕрлери «Большевик» завод пысăк тăкак курчĕ. Вăл туса кăларнă кашни тонна продукци планпа пăхнинчен 44,2 процент чухлĕ хаклăрах пулнă. Завод 801 пин тенкĕ тупăш парас вырăнне 1747 пин тенкĕ тăкак тÿсрĕ. Çакă вăл каллех чĕртавара усăсăр нумай пĕтернинчен килнĕ. Кунта 1 тонна продукци пуçне 12,5 кубометр экстракт вутти ытлашши тăкакланă.

Чĕртавара хуçасăрла тыткалани, ытлашши тăкаклани—пирĕн предприятисен пысăк çитменлĕхĕ. Таварăн хăйне ларакан хакне пăсни çавăнтан килет те ĕнтĕ. Предприятисен малашне çав çитменлĕхе пĕтерес пулать.

2. ТАВАРĂН ХĂЙНЕ ЛАРАКАН ХАКНЕ ПЛАНЛАССИ

Таварăн хăйне ларакан хакне хуçалăх расчечĕпе килĕштерсе тăваççĕ. Хак планне тунă чух предприятин мĕнпур ресурсĕсене шута илеççĕ, чĕртавар запасĕсене плана кĕртмесĕр хăварни пулмалла мар.

Анчах та пирĕн хăшпĕр предприятисен руководителĕсем çапла «чееленеççĕ»: таварăн хăйне ларакан хакне тунă чух предприятин ресурсĕсене пĕтĕмпех шута илмеççĕ, чĕртавар резервĕсене плана кĕртмесĕр хăвараççĕ. Вара предприяти йывăрлăха кĕрсен, чĕртавара хуçасăрла тыткаланă пирки вăл çитми пулсан, плана кĕртмесĕр хăварнă çав резервпа усă кураççĕ. Çапла майпа таварăн хăйне ларакан хакне «ÿсме памаççĕ».

Тĕслĕхрен. Шупашкарти «Росглаввино» совхозне илер. Таварăн хăйне ларакан хакĕн 1943 çулхи планĕ тăрăх 1 декалитр эрех тума 18.9 килограмм чĕртавар (çырла) каймалла пулнă. Чăннипе вĕсем 12,4-шер килограмм çеç тăкакланă. Анчах 1944 çулхи плана тунă чух çавна шута илмен. 1944 çулхи планра чĕртавар тăкаклассине татах та ÿстернĕ: 1 декалитр эрех тума 19,4 килограмм чĕртавар каять тесе палăртнă. Чăннипе 16-шар килограмм çеç кайнă. Çапла вара 1944 çулта кашни декалитр эрех пуçне 3,4-шер килограмм чĕртавар юлса пынă. Çак юлнă чĕртаварпа продукцин хăйне ларакан хакĕ планпа пăхнинчен пысăкрах пулнине витме май пулнă.

Таварăн хăйне ларакан хакне тĕрĕс мар планлани Çĕмĕрлери «Большевик» заводра та пулнă. Кунта 1944 çулхи тавар хакне 1943 çулта туса кăларнинчен 3,2 процент чухлĕ хаклăрах планланă.

Тавар хакне çакăн пек иртнĕ çулхисенчен хаклăрах туса пынипе килĕштерме çук. Мĕншĕн тесен пирĕн социализмлă халăх хуçалăхĕнче таварăн хăйне тăракан хакĕ ÿсме мар, чакса пымалла.

«Росглавхлеб» предприятийĕсем те 1945 çулхи 1-мĕш кварталти продукцин хăйне ларакан хакне 1944 çулхи IV-мĕш кварталтинчен 47.800 тенкĕлĕх ытларах планланă. Çак ытларах планланă сумма, вĕсен шучĕпе, ĕçре пулакан йывăрлăхсенчен тухмалли «резерв» пулса тăрать те ĕнтĕ.

Таварăн хăйне тăракан хакне пăсса планлани Атăл леш енчи торф предприятийĕнче уйрăмах паларать. Кунта иртнĕ çулта тавар хакне 1943 çулхинчен 4 хут хаклăрах, пех тăкакĕсене 2.3 хут хаклăрах, ĕç укçине—1.5 хут хаклăрах планланă. Анчах та ĕçре чăннипе тухнă тăхаксемпе танлаштарса пăхсан, çакăн пек плана вырăнлă теме çук.

И. ФИЛИППОВ.
Госбанкăн Чăваш Конторин управляющийĕ.

ВЕНГРИРЕ ФАШИСТСЕН ВĂРТТĂН ОРГАНИЗАЦИНЕ ТУПНĂ

БУДАПЕШТ, сентябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Венгрири хаçатсенче политика полицийĕ фашистсен вăрттăн организацине тупни çинчен пичетлесе кăларнă. Çав организацие Петер Габор ертсе пынă.

Хаçатсенче çырнă тăрăх, çав организацин массăсене демократиллĕ йĕркесене хирĕçлеме хавхалантармалла, парламента суйлассине кансĕрлесе пымалла пулнă. Хăйĕн ĕçне организаци фашистла листовкăсем сарнинчен пуçласа янă. Хăшпĕр районсемпе учрежденисенче степасем çинче правительствăна тата демократие хирĕçле лозунгсем çыра-çыра хума тытăннă. Хăйĕн ĕçне организаци малтанах палăртса хунă районсенче туса пынă. Çав ĕçсене тума ятарласа уйрăм ушкăнсем тунă.

Сентябрĕн 7-мĕшĕнче политика полицийĕ Хювешвельдере (Пысăк Будапештăн районĕ) çак вăрттăн организацин центрне хупăрласа илнĕ те, унăн руководствине канашлу вăхăтĕнче тытнă. Унтах вăрттăн типографипе склад тупнă. Çав складра тĕрлĕрен хĕçпăшал, гранатăсем, взрыв тăвакан япаласем тата темиçе ешĕк патрон тупнă.

Арестленисене допрос тунă май çакă палăрнă: организаци террорла ĕçсем тума, Венгрин вăхăтлăх правительствин членĕсене, партисен лидерĕсене тата ытти çынсене те вĕлерме палăртса хунă пулнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Шупашкарти Çыхăну конторине хула тăрăх çырусем, хаçатсем салатса çÿреме письмоносецсем кирлĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Дом Связи, Контора связи.

«Заготживсырьен» Чăваш конторине ялан ĕçлеме оперативнăй учет начальникĕ, бухгалтерсем, диспетчерсем, машинистка тата склад заведующийĕ кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Ленина, 31. Телефон 6—42.

Çитĕннисене заочно вĕрентекен вăтам шкул 5—10-мĕш классене халь те вĕренме плет.

Ăçта миçе çул вĕреннине кăтартакан документсем пулсан, тивĕçлĕ класа испытанисĕрех илеççĕ.

Заявленипе пĕрле çак документсене ямалла: 1) ăçта миçе çул вĕреннине кăтартакан свидетельство, 2) сывлăх мĕнлине кăтартакан справка, 3) автобиографи.

Заявленисене çак адреспа ямалла: гор. Чебоксары, Ленинградская, 24.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Солдарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн —2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-99, промышленность пайĕн — 3-97, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00407 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. 6. 59 42 п. л. Тираж 16.000 экз.